28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 АПРЕЛЬ 8 ВЫРСАРНИКУН 67(6818) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Районри çĕрĕç пайĕ

Социализмлă ялхуçалăхĕн ăнăçлăхĕсене колхозсен хирĕсенчи кĕрешÿ татса парать. Çав кĕрешĕве организацилеме пĕлнĕ çĕрте, çĕртен вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илессишĕн пĕлсе кĕрешнĕ çĕрте тухăçлă тырпул ÿсет, выльăх-чĕрлĕх хисепĕ йышланса пырать. Анчах çав кĕрешÿ вăл хăй тĕллĕнех пулса пыма пултараймасть, ăна ертсе пымалла, пуçарса пымалла. Ку ĕçе вара колхозра—колхоз правленийĕсем, районра—районри çĕрĕç пайĕ туса тăмалла.

Çапла вара, районри çĕрĕç пайĕ вăл — государствăн питех те кирлĕ çĕрĕç аппарачĕ, пирĕн государствăн политикине тата унăн мĕнпур ĕçĕсене колхозлă ялта тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма кирлĕ орган пулса тăрать. Районри çĕрĕç пайĕ мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçлет, районăн ялхуçалăхĕ çавăн чухлĕ ытларах вăйланса тата тĕреклĕнсе пыма пултарать. Апла пулсан, районри колхозсем тĕреклĕнсе пырасси нумай тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕн ĕçĕнчен килет. Çĕрĕç пайĕ хăш колхозра мĕнле çитменлĕх пуррине çийĕнчех курса, хăш колхоз мĕнле ĕçре тата мĕн пирки уйрăмах юлса пынине асăрхаса, ун çинчен вăхăтра систерме, вăл ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса пама пĕлет пулсан, хăш колхоз мĕнле ĕçре тата мĕнле майпа мала тухнине туйса илсе, ун çинчен кая юлакансене вăхăтра ăнлантарса пама пĕлет пулсан,—çавăн пек çĕрĕç пайĕ вара лайăх ĕçлет.

Çĕрĕç пайĕн хăйĕн тĕп ĕçне колхозсене организаципе хуçалăх енчен малалла тĕреклетес, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата вĕсен тухăçлăхне ÿстерес, государство панă плансене районри пур колхозсенче те пурнăça кĕртес енĕпе туса пымалла. Çакă вара колхозсенче ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕп пăхăнса пыма, ăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыма кушать. Районра ялхуçалăх артелĕн уставне пăснисем пулсан, уншăн чи малтан çĕрĕç пайĕн работникĕсем ответлă пулса тăраççĕ, çавăнпа вĕсен устава мĕнле пурнăça кĕртсе пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла. Çапла кăтартса парать СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ А. А. Андреев юлташ кăçалхи март уйăхĕнче «Районсенчи çĕрĕç пайĕсен ĕçĕ çинчен» кăларнă хăйĕн приказĕнче.

Районсенчи çĕрĕç пайĕсем нумайĕшĕ хăйсен задачисене лайăх пурнăçласа пыраççĕ, районри ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма пулăшаççĕ. Колхозсене пултаруллăн, кашнин уйрăмлăхĕсене шута илсе, ертсе пыраççĕ, вĕсене вăхăтра пулăшаççĕ, юлса пыракансене малтисемпе танлаштарма тата районри кашни колхоз плансене тултарса пымалла тума тăрăшаççĕ. Çакăн пек çĕрĕç пайĕсен хисепне Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсене кĕртме пулать.

Анчах районсенчи çĕрĕç пайĕсем чылайĕшĕ пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Вĕсен работникĕсем пуринчен ытла канцелярире ларса вăхăта ирттереççĕ, колхозсенче, уйхир бригадисенче сахал пулаççĕ. Колхозсене ĕçлĕ кăтартусем парас вырăнне, вĕсене агрономи науки вĕрентнĕ пек ĕçлеме хăнăхтарас вырăнне, çав çĕрĕç пайĕсен работникĕсем бюрократла меслетсемпе ертсе пырассине ытларах килĕштереççĕ; тĕрлĕ сведенисем пухнипех лăпланса лараççĕ, ытларах телефонпа калаçма юратаççĕ. Кун пек çĕрĕç пайĕсен работникĕсем колхозсенче ялхуçалăх артелĕн уставне пăснисене асăрхамаççĕ, курсан та вĕсемпе çăмăллăнах килĕшеççĕ е хăйсем те устава пăсас çул çине тăраççĕ.

Çакăн пек йĕркепе килĕшме çук. Кашни районри çĕрĕç пайĕ ялхуçалăх ĕçĕсене ертсе пыракан чăн-чăн штаб пулса тăмалла. Çĕрĕç пайĕ колхозсене бюрократла меслетсемпе мар, канцелярири сĕтел умĕнче ларса мар, вĕсен ĕçне тĕплĕн пĕлсе, вĕсен кашнин уйрăмлăхне шута илсе, ертсе пымалла.

Тÿрех калас пулать, парти райкомĕсемпе райисполкомсем те хăшпĕр чухне çĕрĕç пайĕн ĕçне тивĕçлипе хакламаççĕ, вĕсем çине сведенисем пухса ларакан учреждени çине пăхнă пек пăхаççĕ, çĕрĕç пайĕн ответлăхне тата авторитетне ÿстерес вырăнне, унăн ĕçĕсене хăйсем туса пыма тăрăшаççĕ, çĕрĕç пайĕнче ĕçлеме пултаруллă, ĕçе пĕлекен çынсене тупса лартма тăрăшмаççĕ, çĕрĕç пайĕсен работникĕсемпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Анчах паллă мар-и-ха ĕнтĕ: çĕрĕç пайĕн агрономĕ е зоотехникĕ, колхозсенче тата фермĕсенче пулса, унти çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать пулсан, вăл района сводкăсем çырса ларнинчен нумай ытларах усă пама пултарать.

Çĕрĕç пайĕсен ĕçĕнчи тата вĕсене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Вĕсен ĕçне хăвăрт та татăклăн урăхлатса çĕнетни кирлĕ. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен ĕçĕнче çирĕп йĕрке тăвас пулать, дисциплинăна çирĕплетес пулать, вĕсене районри культурăллă та авторитетлă учреждени туса хурас пулать.

Пуринчен малтан, ялхуçалăх специалисчĕсемпе тĕрĕс усă курмалла туни кирлĕ. Специалистсем хăйсен нумайрах ĕç вăхăтне колхозсенче ирттермелле, унта агротехникăпа зоотехника мероприятийĕсене пурнăça кĕртме пулăшмалла, организациллĕ ĕçсем туса пымалла. Çĕрĕç пайĕн аслă агрономĕ хăйсен специалисчĕсем урлă колхозсене агрономи енĕпе ертсе пымалла, агротехника планĕсем туса вĕсене пурнăça кĕртес ĕçе ертсе пымалла, районри агрономсене пухса кашни уйăхрах канашлусем ирттермелле, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмалла. СССР Наркомземĕн приказĕ специалистсене вĕсен пысăк ответлăхĕ çинчен аса илтерет. Çав приказ тăрăх, агрономсемпе зоотехниксен малашне хăйсен ĕçĕ çинчен çулталăкри отчетсем çырса памалла пулать.

Çĕрĕç пайĕсен уйхир ĕçĕсен пахалăхне контроллесе тăмалла. Колхозсен уйхир бригадисем тата МТС-сен трактор бригадисем ĕçе мĕнле пахалăхпа туса пынине тĕрĕслесе тăмалла, çак ĕçре хăйсене пулăшма опытлă колхозниксене явăçтармалла. Анчах çĕрĕç пайĕсен агрономĕсем нумайĕшĕ МТС ĕçĕсемпе интересленмеççĕ, хăшпĕр трактористсен начар ĕçĕпе килĕшсе лараççĕ.

Кунта уйрăмах агроном участокĕ çинчен чарăнса тăрас пулать. Хăй вăхăтĕнче агрономсен участокĕсем пысăк ĕç туса пыратчĕç. Анчах юлашки çулсенче вĕсем чылайĕшĕ хăйсен ĕçне юхăнтарса ячĕç е пачах та ĕçлеме пăрахрĕç. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче начар мар ĕçлекен агроучастокăн çуртйĕрĕсене, пурлăхĕсене тустарса пĕтернĕ. Çакăн пек йăнăша тÿрлетни кирлĕ. Мĕнпур агроучастоксемпе зооветучастоксене тепĕр хут йĕркелесе, вĕсен ĕçне чĕртсе ямалла, вĕсене çуртйĕрсем, оборудованисем, лашасем, çĕр участокĕсем памалла. ВКП(б) Обкомĕ кăçал Вăрнар, Елчĕк, Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Сĕнтĕр, Чкаловски тата Пăрачкав районĕсенче кăтартуллă агроучастоксем организацилеме палăртрĕ. Вăл участоксем хăйсен лайăх примерĕпе колхозсене агрономи енĕпе мĕнле пулăшса пымаллине кăтартса памалла. Çавăнпа та вĕсене организацилесе, ĕçре пулăшса пырасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Партипе правительство çĕрĕç аппаратĕнчи работниксен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пĕрмаях тăрăшаççĕ. Нумаях та пулмасть вĕсен ĕçукçине ÿстернĕ. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ хăйĕн приказĕнче çĕрĕç пайĕсен çурчĕсене йĕркене кĕртме хушать. Районри çĕрĕç пайĕн çурчĕ культурăллă та таса çурт пулмалла. Анчах çакна халĕ чылай çĕрте курма çук-ха. Красноармейски районри çĕрĕç пайĕн çурчĕ аякранах палăрса тăрать: унăн картисем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, алăкĕ çинче çĕтĕк чăпта çакăнса тăрать, çурт ăшĕнче таса мар, ĕçпе пыракансене ларма вырăн çук, пÿлĕмсенче чĕлĕм тĕтĕмĕ каплана тăрать, пĕр - пÿлĕмрех ултăн-çиччĕн ĕçлеççĕ. Аçтан-ха кунта культурăллăх çинчен сăмах пулма пултартăр? Мĕнле авторитет пултăр-ха ĕнтĕ çакăн пек учрежденин? Çĕрĕç пайĕ хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пыма пултартăр тесен, ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен çĕрĕç пайĕсене хăйсен çуртне йĕркене кĕртме, сĕтелсемпе пукансем кирлĕ чухлех тупма, вутă хатĕрлеме пулăшмалла. Специалистсен пурнăçне малалла лайăхлатас шутпа, вĕсене пахча валли çĕр туянма тата закон ирĕк панă чухлĕ выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшмалла, ĕçукçине вăхăтра парса тăмалла.

Районсенчи çĕрĕç пайĕсен штатне инструктор-организаторсене тата инструктор-бухгалтерсене тепĕр хут кĕртнĕ. Çĕрĕç пайĕсен, парти райкомĕсемпе райисполкомсен задачи—çав ĕçсенче ĕçлеме пултаруллă та ĕçе юратакан çынсене тупса лартасси пулать.

ВКП(б) Обкомĕ пур районсенче те «Колхозниксен çурчĕсене» уçма хушрĕ, вăл çуртсенче агротехникăпа зооветеринари кабинечĕсем, ялхуçалăх библиотеки, лабораторисем тата ялан ĕçлекен ялхуçалăх выставки пулмалла. Вăл çуртсене кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен уçса ĕçе ямалла.

Çÿлте асăннă мĕнпур ĕçсене туса ирттерни çĕрĕç пайĕн ĕçне лайăхлатма, унăн авторитетне ÿстерме пулăшмалла. Çапла пултăр тесен, çĕрĕç пайĕсен работникĕсем СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн приказне хăвăрт тата пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртсе пыма тивĕçлĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 6-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕç çарĕсен ГДАНЬСК хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре хупăрласа илнĕ ушкăнĕн юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, ШПЕРЛИНГСДОРФ, ЛАНДАУ, ХОХЦАЙТ, КЛАЙН ШАРФЕНБЕРГ, ГРОСС ШАРФЕНБЕРГ, КВАДЕНДОРФ, РАЙХЕНБЕРГ, ГРОСС ПЛЕНЕНДОРФ, АУССЕНДАЙХ, ВЕСТЛИХ НОЙФЭР ялĕсене туртса илнĕ. Тăшман çарĕсен ГДЫНЯ хулинчен çурçĕртерехри ушкăнĕн юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă чухне фронт çарĕсем апрелĕн 5-мĕшĕнче 3.340 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ тата 239 хир тупи тытса илнĕ.

БРЕСЛАУ хули районĕнче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, БРЕСЛАУ хулипе пĕрлешсе ларнă КЛЕЙН МОХБЕРН, КЛЕЙН ГАНДАУ, КОЗЕЛЬ ялĕсене, суднăсем тăвакан завода тата хĕвеланăçĕнчи аэродрома туртса илнĕ, аэродромра 27 самолет тытса илнĕ.

Карпат тăвĕсен тăрăхĕнче, РУЖОМБЕРОК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем Чехословаки çарĕсемпе пĕрле наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра—ЛИПОВА, РАДЗЕХОВЫ, БЖУСЬНИК, ЕРДУТКА, ЗАЗРИВА, ЖАШКОВ, КОМЯТНА ятлă пысăк ялсем тата БИСТЕРЕЦ, ВЕЛИЧНА, ИСТЕБНЕ, ГРБОЛТОВА чугун çул станцийĕсем.

БРАТИСЛАВА хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ПОРУБО, ШУТОВЦЕ, СУЧАНЫ, ДЕЖЕРИЦЕ, ПОДОЛЬЕ, ВРБОВЕ, ДОБРА ВОДА, ЯБЛОНИЦА, ШАШТИН, КУКЛОВ, КУТЫ ятлă пысăк ялсем. Вара 6 километр сарлакĕш фронтпа шыв вăррипе Куты ялĕ хушшинче Морава шывĕ çине тухнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, Дунай шывĕн кăнтăр хĕррипе наступлени туса пырса, ДОЙЧ АЛЬТЕНБУРГ, ПЕТРОНЕЛЛИ, ВИЛЬДУНГСМАУЭР, ШАРНДОРФ, РЕГЕЛЬСБРУНН, АРБЕШТАЛЬ, ТРАУТМАНСДОРФ, ХАСЛАУ, ЭЛЛЕНД, ФИШАМЕНД МАРКТ, ФИШАМЕНД ДОРФ ялĕсене туртса илнĕ. Апрелĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 4.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: хир туписем—150, минометсем—65, пулеметсем—361, винтовкăсем—4.000 яхăн, автомашинăсем—578.

ВЕНА енче УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, тăшманпа çапăçса, ШВЕХАТ, АЛЬДЬТЕТЕНКОФ, РОТНОЙЗИДЛЬ (ВЕНАРАН 2 километр кăнтăртарахра), ХЕННЕРСДОРФ ялĕсене туртса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах БАЛАТОН кÿллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем Болгари çарĕсемпе пĕрле наступлени туса пынă, Югослави çĕрĕнче халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ДОКЛЕЖОВЬЕ, ОДРАНЦИ, БИСТРИЦА, ХОТИЗА, КРАЛЕВЕЦ, БЕЛИЦА, ПУШИНЕ, ТОТОВЕЦ ятлă пысăк ялсем. Апрелĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 9.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—11, танксем—24, бронетранспортерсем—14, хир туписем—99, пулеметсем—194, автомашинăсем—340, паровозсем—9, чугун çул вагонĕсем—245.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 40 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гданьск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем йышлă каналлă тата шурлăхлă вырăнта малалла куçса пынă. Халăх пурăнакан пунктсемпе усă курса, нимĕçсем хытă хирĕç тăраççĕ. Каялла чакнă чухне вĕсем кĕперсене сывлăша сиктерсе яраççĕ, çулсем çинче тата каçăсем патĕнче минăсем лартса хăвараççĕ. Пирĕн çарсем, çакăн пек тĕрлĕ чăрмавсене çĕнтере-çĕнтере пырса, нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран сирпĕтсе кăларнă. Пĕр участокра гитлеровецсем дамбăна уçса янă та Шперлингсдорф ялĕ патне пымалли вырăнсене шыва путарнă. Пирĕн подразделенисем çав вырăнтан аякран кайса иртсе кайнă та тăшмана Шперлингсдорф ялĕнчен хăваласа кăларнă. Гданьск хулинчен хĕвелтухăçнерехре нимĕçсенчен юханшыв çинче çÿремелли ултă пароход, 12 баржа тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Бреслау хулинче пирĕн подразделенисем нимĕçсен пĕр ушкăнне хула гарнизонĕн тĕп вăйĕсенчен татса илнĕ те Одер шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă. Кĕске вăхăт хушши пынă çапăçура тăшман ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсене пĕр батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ. 170 нимĕçе тыткăна илнĕ. Тăшмантан 52 тупă, 100 автомашинăна çити, пĕр паровоз тата 194 вагон тытса илнĕ.

Паян пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Бреслау хулинчи вăрçă объекчĕсене çĕнĕрен пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче 20 тĕлте ытла вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Ружомберок хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем Чехословаки çарĕсемпе пĕрле çаплах малалла тапăнса пынă. Тăшман ту айккисенче çирĕпленсе ларнă та, вăйлăн персе тăрса, пирĕн чаçсем малалла куçса пынине чарма хăтланнă. Совет подразделенийĕсем тăшмантан аякран иртсе кайса ту хырçи урлă каçса кайнă та нимĕçсен артиллери позицийĕсене хыçалтан сасартăк атакăланă. Çапăçура нимĕç артиллерисчĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем 18 тупă тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем ту çинчен улăха аннă та, тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене татса, нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă. Енер туртса илнĕ Ружомберок хулинче пирĕн çарсем трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—7 паровоз тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 580 вагон ытла.

* * *

Братислава хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Ваг шывĕ улăхĕпе çурçĕрелле куçса пынă, нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Совет чаçĕсем сăртлă-вăрманлă вырăн урлă каçнă та Яблоница ятлă пысăк чугун çул станцине çав тери хăвăрт атакăласа тытса илнĕ.

Братиславăран çурçĕртерехре совет пехотинецĕсем тата танкистсемпе кавалеристсем, çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, анлă фронтпа Морава шывĕ çине тухнă. Каялла чакакан тăшман ушкăнĕсене шыв хĕррине хĕстерсе лартнă, вара нимĕçсене çуррине ытла пĕтерсе тăкнă, юлашкисене тыткăна илнĕ. Пĕр Ступава ялĕнчен хĕвеланăçнерехри районра кăна пирĕн пĕр гвардейски часть 700 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 13 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă. Гераськин офицерăн кавалерисчĕсем, тăшмана хăваласа пырса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă, «король тигрĕ» йышши танк тата 4 бронетранспортер тытса илнĕ. Гварди старши лейтенанчĕ Мартынюк командир пулса ертсе пыракан эскадрон тăшмана атакăланă та 50 гитлеровеца вакласа тăкнă. Çав районра пирĕн боецсем нимĕçсенчен юсавлă 7 танк тытса илнĕ.

* * *

Вена енче Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем малалла куçса пынă. Тăшман хăйĕн çарĕсене васкасах çĕнĕ вăйсем хушса парать. Нимĕçсем кунти ялсенчен, заводсенчен, çуртсенчен хăйсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсем тунă та хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Тăшман контратакисене сире-сире ярса, пирĕн çарсем утăм хыççăн утăм малалла куçса пыраççĕ, нимĕçсенчен вăйлă çирĕплетнĕ темиçе яла туртса илнĕ. Кун каçиччен пулса иртнĕ çапăçусенче тăшманăн темиçе пин салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕн авиацийĕ Данциг бухтинче тăшман çарĕсене илсе пыракан хăвăрт çÿрекен виçĕ десант баржине шыва путарнă.

СУРАКИ УМĔН

Клевер акма тухнă

КУКЕÇ, апрелĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕньял ял Советне кĕрекен «Красный герой» колхоз ĕнерхи кун районра чи малтан клевер акма тытăннă. Вăл 12 гектар акса хăварнă.

А. АЛЕКСЕЕВ.

ВĂРЛАХЛАХ КЛЕВЕР ПАРСА ПУЛАШНА

Вăрмар районĕнчи «Париж Коммуни» колхоз «Свобода», «Победа» тата ытти колхозсене кашнинех икшер центнер, «Хĕрлĕ Шептах» колхоза 1 центнер клевер вăрлăхĕ парса пулăшнă.

КОЛХОЗНИКСЕМ КОЛХОЗА ВĂРЛАХ ПАРАÇÇĔ

Çĕмĕрле районĕнчи «Победа» колхозăн вăрлăхлăх çĕрулми çитмест. Колхозниксем хăйсен запасĕнчен вăрлăхлăх çĕрулми пухма йышăннă. Колхоз председателĕ Решнов—6 пăт, Ванюковпа Оборин бригадирсем 3-шер пăт пама пулнă. Çак ĕçе фронтовик арăмĕсем те активлăн хутшăнаççĕ. Т. Шелахова, Н. Хасина, В. Кузнецова тата ыттисем те кашниех 3-шер пăтран кая мар панă. Çапла вара колхоз членĕсем хăйсен запасĕнчен 180 пăт ытла пухнă.

АГРОКРУЖОКРА ВĔРЕНЕÇÇĔ

Сĕнтĕр районĕнчи Мăн Хураçка ял Советĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозра агрокружок хĕл пуçланнăранпах ĕçлет. Кружока 40 çын ытла çÿрет. Кружокра, агротехникăна вĕреннисĕр пуçне, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановленине тата ытти çавăн пек паха документсене вĕренеççĕ.

Тĕрĕслĕ мĕн кăтартрĕ

ИЕПРЕÇ, апрелĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче районри комисси колхозсем суракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухрĕ. Тĕрĕслĕ 52 колхозран 18-шĕ суракине хатĕрленсе çитменнине палăртрĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозах илер. Кунта ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсама тытăнман та. Акма вăрлăх чылай çитмест. «Победа» колхозра та çав çитменлĕхсемех. Акмалли вăрлăхсем пурте кондицие лармаш. Плугсене питех те начар юсанă. Юсанă 15 плугран 3-шĕ ĕçе юрăхсăр, вĕрен-пăявсене те ячĕшĕн çеç явса хатĕрленĕ. Колхозра агротехникăна вĕренес ĕçе организацилемен. Вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Комисси «Трудовик», «Строитель», «Çĕнĕ пурнăç» тата ытти колхозсем те суракине çителĕксĕр хатĕрленнине палăртрĕ.

П. КУРАКОВ.

17 колхозра вăрлăх çитмест

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри нумай колхозсем суракине тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Чылай колхозсенче суракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ ĕнтĕ. Тусай ял Советĕнчи колхозсенче суракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине комисси нумаях пулмасть тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслĕ суракине хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. «Герой» колхоз вăрлăхсене сортласа хунă, вăрлăхсен пахалăхĕ те аван. Бригадăсенче звеносем туса йĕркеленĕ.

Районĕпе илсен, вăрлăх çитет. Анчах 17 колхозра тĕрлĕ культурăсен вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Апла пулин те, райçĕрĕç пайĕ вăрлăх улăштарса илессине йĕркелемен. «Сесмер», «Красная звезда», «Стахановец», Потемкин ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăхсем хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Сесмер» колхоз председателĕ Михайлов юлташ: «Пирĕн вăрлăхсем çителĕклĕ, вăрлăх илме ытти колхозсене пирĕн пата ярăр», тесе сÿпĕлтетнĕ. Анчах тĕрĕсленĕ хыççăн тулă вăрлăхĕ 15 центнер, пăрçа вăрлăхĕ 18 центнер çитменни палăрнă. Вика вăрлăхне вуçех те çапман. Районри 88 колхозран 67 колхозра çеç клевер вăррине шĕкĕлченĕ. «Красная звезда» колхоз 27 центнер ясмăк вăрлăхне вуçех сортламан, Потемкин ячĕпе тăракан колхозăн пĕр центнер ытла клевер вăрлăхĕ çитмест.

Чадукасси ял Советĕнчи «Орден Ленина» колхоз председателĕ Андреев юлташ та вăрлăхсене сортлассине организацилемен.

Çамрăк конюхсем

ИЕПРЕÇ. «Трудовик» колхозра конюхсем пулса 14 çулхи М. Платоновпа И. Данилов юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсенчен кашни 7-шер лаша пăхать. Вĕсем пăхакан лашасем пурте самăр, таса та вăйлă. Витене те вĕсем таса тытаççĕ. Вите сывăхĕнчи тислĕке хире вăхăтра кăлараççĕ. Çак колхозрах 1-мĕшпе 2-мĕш бригадăсен конюхĕсем вара лашасене начар пăхаççĕ. Çак икĕ бригадăри 18 лашаран 9-шĕ кÿлме юрăхсăр, тепĕр 9-шĕ те начарланса кайнă.

Лайăх конюхсене Платоновпа Данилов юлташсене колхозниксем ырласа, ĕçшĕн хушса тÿлемелле турĕç тата мĕнпур лашасене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерме правление çирĕп кăтарту пачĕç.

(Хамăр корр.).

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн Комитечĕ йышăннă тăрăх, Администраци Комитечĕн ларăвĕ апрелĕн 10-мĕшĕнче Вашингтон хулинче пулмалла. Совет профсоюзĕсенчен Администраци Комитечĕн ларăвне çак кунсенче Комитет членĕ—ВЦСПС секретарĕ М. П. Тарасов тухса кайнă. (ТАСС).

Сыхăну работникĕсен ăмăртăвĕ

СОВЕТСКОЕ. Сыхăну учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, Чăваш республики 25 çул тултарнине сыхăну ĕçне лайăхлатнипе паллă тăвас майпа, Элĕк районĕнчи сыхăну работникĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Районри сыхăну работникĕсем телефонсемпе телеграфа йĕркеллĕ ĕçлеттерме, укçа-тенкĕ тупăшне илмелли плана тултарма, хаçат-журналсемпе корреспонденцисене йĕркеллĕ çÿретме т. ыт. ĕçсем тума пулса обязательствăсем илчĕç. Социализмлă ăмăртăва отделенисемпе агентствăсем те, колхозсенчи письмоносецсем те хутшăннă.

Я. СИГАЙ.

ÇАМРĂК ТРАКТОРИСТСЕМ БРИГАДĂНА КАЯÇÇĔ

Ишлейри машинно-тракторнăй станцинчи курсран 30 çын вĕренсе тухнă. Курсран вĕренсе тухнисене иккĕмĕш категориллĕ тракторист ятне панă. Халĕ вĕсене трактор бригадисем çумне çирĕплетнĕ. Паянтыранах вĕсем колхозсене тухса каяççĕ.

Конкурс срокне тăснă

Чăваш автономийĕ 25 çул тултарнă ятпа ирттерекен конкурсăн—литература, искусство тата истори ыйтăвĕсемпе çырнă произведенисене тăратмалли правительство конкурсĕн—срокне Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен тăснă.

Ленин орденне тунăранпа 15 çул çитрĕ

1930 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче, СССР Центральный Исполнительный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, Ленин орденĕ туса хунă. Иртнĕ 15 çул хушшинче Совет Союзĕн çав аслă наградине пирĕн халăхăн тивĕçлĕрен тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем, социализмлă государствăн чи паллă деятелĕсем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи пуçаруçăсем, Хĕрлĕ Çарăн полководецĕсемпе воинĕсем, наука работникĕсем, искусствăпа литература мастерĕсем илчĕç.

Ленин орденне пĕрремĕш пятилеткăна пурнăça кĕртессишĕн хĕрÿллĕн кĕрешнĕ тапхăрта туса хунă. Орден статучĕ тăрăх, вăл орденпа «ССР Союзĕнчи уйрăм граждансене, коллективсене, учрежденисене, предприятисене тата обществăллă организацисене социализм строительствинче питĕ паха ĕçсем тунăшăн» наградăламалла. Сталинла пятилеткăсем хушшинче çав аслă наградăна 7.250 çын илнĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçура Хĕрлĕ Çарăн темиçе пин боецĕпе офицерĕ палăрнă. Тылри çынсем те çĕршывăн чыслăхĕшĕн калама çук паттăр ĕçсем тунă. Çапăçусенче хăюллă пулнăшăн тата ĕçре хастарлăх кăтартнăшăн Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче 35.636 çынна Ленин орденĕ парса наградăланă.

Большевиксен партине организацилес, совет государствине тăвас, Совет Союзĕнче социализм обществине туса хурас тата Совет Союзĕнчи халăхсене пĕр-пĕринпе туслăн пурăнтарас тĕлĕшпе çав тери чаплă ĕçсем тунăшăн И. В. Сталин юлташа вăл 60 çул тултарнă май Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне панă чухне Ленин орденне панă. Ленин орденĕн кавалерĕсем хушшинче — чи паллă Сталинла полководецсем Совет Союзĕн Маршалĕсем Жуков, Василевский, Конев, Малиновский, Рокоссовский, Толбухин.

15 çул хушшинче СССР Верховный Совет Президиумĕ тата вăл хушнипе фронт командующийĕсем 42.886 çынна Ленин орденĕ парса наградăланă. Çав наградăна илме чи лайăх ĕçлекен предприятисем, ăслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсем, колхозсем, çар чаçĕсем тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем хушшинче—Киров ячĕпе тăракан «Динамо» завод, Магнитогорскри металлурги комбиначĕ, Сталин ячĕпе тăракан автозавод, Днепропетровск облаçĕнчи Генич районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, ВЛКСМ Мускав организацийĕ, Хĕрлĕ Çарăн Жуковский ячĕпе тăракан Сывлăш-çар академийĕ, СССР-ти Ленин ячĕпе тăракан библиотека, Мускаври Пысăк театр, Пĕчĕк театр тата ыттисем те.

Ленин орденне илме Азербайджан, Белорусси, Грузи, Узбек ССР-ĕсем тивĕçлĕ пулчĕç. 1945 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, «Ленинград ĕçхалăхĕ çĕршыв умĕнче çав тери чаплă ĕçсем тунăшăн, тăшман блокадин йывăр условийĕсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешÿре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, çирĕп дисциплинăллă пулнăшăн» Ленин хулине Ленин орденĕпе наградăланă.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче Хĕрлĕ Çарпа пĕрле ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсен ывăлĕсем те çапăçаççĕ. Совет правительстви вĕсен паттăрлăхĕпе хăюлăхне пысăка хурса хакларĕ. Ленин орденĕ парса çаксене наградăланă: Чехословаксен 1-мĕш корпусĕн командующине Свобода генерала, поляксен Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан 1-мĕш дивизийĕн воинĕсене Гюбпа Кживоне (вĕсене Совет Союз Геройĕн ятне панă), кĕрешекен Францин «Норманди» çар чаçне кĕрекен офицер-летчиксене—Совет Союзĕн Геройĕсене Марсель Альберта тата Роллан де-ла-Пуапа (ТАСС).

И. В. Сталин Маршал И. Броз-Тито Маршалпа калаçни

Апрелĕн 6-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Маршал Югославири Министрсен Совечĕн Председателĕпе И. Броз-Тито Маршалпа калаçнă.

В. М. Молотов И. Шубашич господинпа калаçни

Апрелĕн 6-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Югославин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе И. Шубашич господинпа калаçнă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 66-мĕш номерĕнче)

V. КАЙĂК-КЕШЕКСЕМ ТАТА КРОЛИКСЕМ ЕРЧЕТЕС ЕНЕПЕ

1. Государствăн 1945 çулта колхозсенче кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли планне облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

2. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, кайăк-кĕшĕксем ĕрчетмелли тата вĕсене самăртмалли плана тултарас шутпа, кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсенчен 39.006 пин чĕпĕ, вăл шутран 32.385 пин чĕпĕ колхозсене, сутмалла тума хушас.

3. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: сывăхри 1—2 çул хушшинче тĕштырă культурисем акакан пур колхозсенче те чăх-чĕп фермисем организацилемелле тата пĕвесемпе кӳлĕсем пур колхозсенче пуринче те хуркăвакал фермисем организацилемелле.

4. Кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсем валли ăратлă кайăк-кĕшĕк çăмартине çителĕклех хатĕрлемелле тăвас шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене çапла тума хушас: кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсен çывăхĕнчи колхозсемпе совхозсенче ăратлă кайăк-кĕшĕксен фермисене организацилемелле. Çак ăратлă кайăк-кĕшĕксен фермисем инкубаци сезонĕ пынă вăхăтра чĕпĕ кăларма кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсене ăратлă кайăк-кĕшĕксен çăмартине памалла.

5. Çакăн пек йĕрке тăвас: кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсене чĕпĕ кăларма панă çăмартасене колхозсем государствăна çăмарта памалли обязательствăна тултарнин шутне кĕртеççĕ: икĕ чăх çăмартине обязательствăра кăтартнă виçĕ çăмарта вырăнне, кăвакалпа кăркка пĕр çăмартине виçĕ çăмарта вырăнне, хурăн пĕр çăмартине пилĕк çăмарта вырăнне шутласа илеççĕ, çав çăмартасемшĕн колхозсем обязательнăй поставкăра тăрăх паракан çăмарташăн тӳленĕ хаксемпе укçа тӳлеççĕ.

6. СССР Наркомзагне çапла тума ирĕк парас: колхозсемпе колхозниксем кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсене обязательнăй поставкăран ирттерсе çăмарта параççĕ пулсан, ăна, халиччен эквивалентсем тăрăх шутласа, выльăх-чĕрлĕхĕн ытти продукцине пани вырăнне хурса шута илмелле.

7. Инкубаци планне тултармалла тăвас шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене 1945 çул хушшинче кайăк-кĕшĕксен инкубаторлă станцийĕсене пурне те юсаса çитерсе ĕçе яма хушас.

8. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: кайăк-кĕшĕк фермисем тытакан пур колхозсенче те кайăк-кĕшĕксем валли кирлĕ чухлĕ апат вăхăтра хатĕрлесе хумалла; вĕсем валли хăварнă тĕштырра перекетлес тата кайăк-кĕшĕксен тухăçлăхне ӳстерес шутпа, кайăк-кĕшĕксене тырă вырса илнĕ участоксенче, садсенче тата техникăллă культурăсем акнă çĕрсем çинче çӳретсе тăрантарассине анлăн сармалла; çавăн пекех тата техникăллă культурăсен участокĕсенчи, садсенчи хурткăпшанкăсемпе кĕрешес ĕçре чăхсемпе тата кăркасемпе анлăн усă курмалла.

9. 1945 çулта колхозсенче кроликсем ĕрчетмелли государственнăй плана облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

Çакăн пек йĕрке тăвас: ĕлĕкрех кролик ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçленĕ колхозсен 1945 çулта кролик фермисене тепĕр хут туса ĕçе ямалла, çак шутпа вĕсен ĕлĕкрех пулнă фермăсенчен юлнă кролик витисемпе, клеткăсемпе тата кролик ĕрчетме вĕреннĕ кадрсемпе усă курмалла.

10. СССР Наркомземне тата тивĕçлĕ облисполкомсемпе крайисполкомсене, колхозсенчи кролик фермисемпе усă курса, 1945 çулта государствăн ăратлă кроликсем ĕрчетекен 5 рассадникне организацилеме хушас, вăл шутран Мускав облаçĕнче «фландр» тата «белый великан» ăратлă кроликсем ĕрчетекен рассадник, Киров облаçĕнче «ангарски» (мамăклă) кроликсем ĕрчетекен рассадник, Сталинград облаçĕнче—«шиншилл» ăратлă кроликсене, Молотов облаçĕнче — «шиншилл» тата «венски» кăвак кроликсене, Алтай крайĕнче—«венски» кăвак кроликсене ĕрчетекен рассадниксем организацилемелле.

11. Колхозниксен килĕсенче кролик ĕрчетес ĕçе вăйлатас шутпа, планран ирттерсе ĕрчетнĕ ама кроликсене колхозниксене укçалла сутма е ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсемшĕн пама колхозсене сĕнес.

12. Колхозсенче кролик фермисем организацилеме, çавăн пекех тата колхозниксене, рабочисемпе служащисене сутса кроликсем туянтарма СССР Наркомвнешторгне 1945 çулта хăйĕн совхозĕсенчен СССР Наркомземне 50 пин кролик сутма хушас.

13. Кролик ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксен материальнăй интересне çĕклес шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: кролик фермисенче ĕçлекен колхозниксене, 1945 çултан пуçласа, ĕçкунĕсем парса тӳленисĕр пуçне, кашни ама кроликран 10 çăвăртан ытларах илсе 4 уйăх таран пăхса ӳстернĕ кроликсен 50 процентне çити парса, ĕçшĕн хушса тӳлемелле.

VI. ВЫЛЬĂХ АПАЧЕ ЕНЕПЕ

1. 1945 çулта колхозсенче шултăра апатсем 88.051 пин тонна чухлĕ хатĕрлеме палăртса, план çирĕплетес.

2. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) колхозсенче, МТС-сенче тата совхозсенче утă пухса кĕртмелли машинăсене юсас ĕçе вĕсене утă пухса кĕртес ĕç пуçланиччен пĕр уйăх малтан юсаса пĕтермелле туса организацилемелле;

б) вырăнти тата союзлă промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперацийĕн предприятийĕсенче утă пухса кĕртмелли машинăсем валли кирлĕ чухлĕ запаслă пайсем туса кăларассине тата утă пухса кĕртмелли инвентарьсем: сенĕксем, лапаткасем тата ыттисем те туса хатĕрлессине организацилемелле;

в) кашни хуçалăхра, совхозра тата МТС-ра, кашни трактор бригадипе уйхир бригадинче утă пухса кĕртмелли ĕç планĕсене вăхăтра туса хатĕрлемелле: çав плансенче колхозсемпе совхозсенчи ĕç вăйĕпе, утă пухмалли машинăсемпе тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе пĕтĕмĕшпех усă курассине, çавăн пекех тата кирлĕ таран тракторсемпе те усă курассине палăртса хумалла; утă пухса кĕнĕ çĕрте ĕçлеме хуçалăхри шалти ĕçсенче, подсобнăй предприятисемпе отраслĕсенче ĕçлекен работниксене май пур таран ытларах пушатмалла.

3. Лайăх пахалăхлă выльăх апачĕ хатĕрлесе хурас шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: утăсене иртерех срокасенче—пăрçа йышши курăксемпе тĕрлĕ курăксене вĕсем чечеке ларнă вăхăтра тата тĕштырă йышши курăксене вĕсем пучаха ларнă вăхăтра çулса пухмалла, çапла вара утă пухса кĕртес ĕçе, утта капана хывассине те шута илсе, тĕштырăсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен пĕтĕмĕшпех вĕçлемелле.

4. Утта вăхăтра пухса кĕртнĕшĕн хавхалантарас шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: утă пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен колхозниксене, ĕçкунĕсем парса тӳленисĕр пуçне, çулса пухнă тата капана хывнă уттăн 10-мĕш пайне памалла. Капана хывнă утта уйхир бригадин бригадирĕ турттарса е урăх майпа виçсе йышăнмалла, çавăн чухне вара утă пухса кĕртнĕшĕн колхозниксене утă сырса памалла. Бригадăри е звенори колхозниксем хушшинче утă валеçнĕ чухне вĕсем утă пухнă çĕрте ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсен хисепне шута илмелле. Утă пухса кĕртнĕшĕн колхозниксене утă парас ĕçе колхоз правленийĕ утă пухса кĕртес ĕç вĕçленнĕ хыççăн, анчах сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, туса ирттерет.

5. Лашапа ĕçлемелли сенокосилкăсемпе лайăх çулнăшăн утă çулакан чи лайăх колхозниксене хавхалантарас шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: утă çулакансем тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен 40 гектартан ирттерсе çулнă кашни гектаршăн вĕсене 20-шер килограмм утă памалла.

6. Колхозсемпе совхозсенче выльăх апачĕн хисепне татăклăнах нумайлатас шутпа, СССР Наркомземне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Наркомпищепромне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: выльăх апачлăх культурăсем акмалли тĕрĕс пусуçаврăнăшĕсем тăвас ĕçе 1945 çулта вăйлатса ямалла; государствăн ăратлă выльăхсем ĕрчетекен рассадникĕсем пур районсенчи колхозсенче, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх нумай ĕрчетекен пысăк колхозсемпе совхозсенче, вĕсен акмасăр ӳсекен улăхсем çук пулсан, пусуçаврăнăшĕсенче курăксем акмалла тăвас пулать.

7. Выльăхсем валли сĕткенлĕ апатсем çителĕклĕ хатĕрлес шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: 1945 çулта фермăсем çумĕнчи участоксенче кашни колхозрах 3—5-шер гектар чухлĕ çĕрулми, тымарçимĕçсем тата выльăх апачлăх ытти культурăсем акса хăвармалла, çав культурăсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен бригадăсенчи работниксен вăйĕпе ĕçлесе тумалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен бригадăсен работникĕсене, çĕрулмипе тымарçимĕçсем тата ытти культурăсем акса туса илнĕшĕн ĕçкунĕ шутласа панисĕр пуçне, планран ирттерсе пухса илнĕ çимĕçĕн виççĕмĕш пайне валеçсе памалла.

Çакăн пек йĕрке тăвас: фермăсем çумĕнчи участоксенче пухса илнĕ мĕнпур çĕрулмипе ытти культурăсем пĕтĕмĕшпех выльăхсене тăрантарнă çĕре кăна каймалла.

8. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене çапла тума хушас: пăрçа йышши курăксенчен, кукурузăран, хĕвелçаврăнăшĕнчен, пахча-çимĕç тунисенчен тунă пысăк пахалăхлă силос кашни сысна амипе унăн çурисем валли 5 центнертан кая мар, ир çулса илнĕ пăрçа йышши курăксен утине авăртса тунă çăнăх 3—5-шер центнер хатĕрлесе хурас ĕçе организацилемелле.

Государствăна тырă памалли обязательствăсене тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли плана тултарнă хыççăн, вăрлăх фончĕсене хывса хăварнă хыççăн, колхозсенче 1944—1945 çулсенчи тырăран выльăх апачĕ валли тĕштырă уйăрса памалла.

9. Колхозсене çапла тума сĕнес: силос хывнă чухне хирте акмасăр ӳсекен курăксемпе анлăн усă курмалла, утă пухса кĕртнĕ чухне çанталăк начар тăрать пулсан, улăхра акмасăр ӳсекен курăксемпе те усă курмалла. Çакăн пек йĕрке тăвас: силос хывмалли плана тĕштырăсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен, тĕпрен илсен, пурнăçа кĕртсе çитермелле.

Силос хывнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене хавхалантарас шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: силос щăткăсене, траншейăсемпе башнисене тултарса çитернĕ хыççăн, колхозниксене, ĕçкунĕ шутласа панисĕр пуçне, силос хывнă çĕрте ĕçлесе илнĕ кашни ĕçкунĕ пуçне 10-шар килограмм утă хушса памалла.

10. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене çапла тума хушас: 1945 çулхи майăн 15-мĕшĕччен, Çĕпĕрпе Урал районĕсенче вара 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен, силос хывмалли сооруженисем (башнăсем, траншейăсем тата щăткăсем) пуррипе çуккине тата вĕсем мĕнлине тĕрĕслесе тухмалла, вĕсене юсас тата государство силос хывас тĕлĕшпе панă плана тултарма кирлĕ чухлĕ çĕнĕ сооруженисем туса хатĕрлес ĕçе организацилемелле.

11. Выльăхсене кĕтӳре çӳретсе ĕрчетни кĕтӳ кĕтмелли вырăнсемпе лайăхрах усă курас тата выльăх-чĕрлĕхрен йӳнĕ продукци илес тĕлĕшпе халăх хуçалăхĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, Казах, Узбек, Туркмен, Киргиз, Азербайджан, Армян, Грузин ССР-ĕсен совнаркомĕсемпе вăл союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, Дагестан тата Çурçĕр Осетин АССР-ĕсен совнаркомĕсемпе ВКП(б) обкомĕсене, Астрахань, Грозный облаçĕсен облисполкомĕсемпе ВКП(б) обкомĕсене, Ставрополь крайисполкомĕпе ВКП(б) крайкомне выльăх-чĕрлĕхе кĕтӳре çӳретсе ĕрчетессине малалла вăйлатма хушас, çак шутпа:

а) 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕччен кашни колхозпа совхоз тăрăх 1945—1946 çулсенче выльăх-чĕрлĕхе ăçта хĕл каçармаллине кăлартса план туса хатĕрлемелле. Выльăхсене хĕлле кĕтӳ кĕтсе çӳреме илсе каймалли вырăнсене палăртмалла, хĕлле кĕтӳ кĕтсе çӳремелли районсенче, е вĕсен çывăхĕнче, уттăн страховой запасне тусa хатĕрлемешкĕн кашни колхозпа совхоз утă çулмалли участоксем уйăрса памалла;

б) выльăхсене хĕллехи вăхăтра кĕтӳ кĕтсе çӳремелли вырăнсенчи утă çулмалли участоксемпе çуркуннехи, çуллахи тата кĕркуннехи вăхăтсенче усă курмалла мар, çав участоксене выльăх-чĕрлĕх кĕрсе кайса çĕмĕресрен сыхласа тăрас ĕçе йĕркелемелле;

в) выльăхсене хĕллехи вăхăтра кĕтӳре çӳретсе ĕрчетекен кашни колхозпа совхозра выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме утă çулас ĕç пуçланиччен ятарласа бригадăсем организацилемелле тата вĕсене утă пухса кĕртмелли инвентарьсем, кирлĕ чухлĕ ĕç выльăхĕ уйăрса памалла.

12. Хĕллехи вăхăтра выльăхсене кĕтӳре çӳретекен колхозсемпе совхозсене кĕтӳ кĕтмелли вырăнсенче выльăхсене шăварма 1945 çулта çăлсем туса хатĕрлеме хушас, çак шутпа çăлсене пурне те юсаса йĕркене кĕртмелле, çĕнĕ çăлсемпе шыв тытмалли вырăнсем тумалла, çавăн пекех тата хĕллехи вăхăтра кĕтӳре пулакан выльăхсем валли тата вĕсене кĕтекен колхозниксемпе совхозсен работникĕсем валли çуртйĕрсем туса хатĕрлемелле.

13. Выльăхсене кĕтӳре çӳретсе ĕрчетекен облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи партипе совет тата çĕр ĕç органĕсене 1945 çулта хĕллехи вăхăтра кĕтӳ кĕтмелли вырăнсенче шултăра апатсен страховой запасĕсене хатĕрлеме хушас: майракаллă шултăра выльăхсем валли 7—8-шар центнертан кая мар, кашни лаша валли 10—12 центнер тата кашни сурăх валли пĕр центнер шултăра апат хатĕрлемелле.

Выльăх апачĕн страховой запасĕсене выльăхсене хĕлле кĕтӳре çӳретмелли вырăнсенче, çавăн пекех тата выльăхсене хĕл каçарма илсе каймалли çулсем çинче вырнаçтарса хумалла, выльăх апачĕн çав страховой запасĕсене çирĕп сыхласа усрамалла.

14. Облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен совнаркомĕсене выльăх-чĕрлĕхе кĕтӳ кĕтмелли вырăнсенче колхозниксемпе совхозсен рабочийĕсене культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе организацилеме хушас.

VII. КОЛХОЗНИКСЕНЕ ВЫЛЬĂХ-ЧЕРЛЕХ ТУЯНМА ПУЛАШАССИ ÇИНЧЕН

1. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: выльăх-чĕрлĕх усраман колхозниксене тата, пуринчен малтан, Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пăрусем, сыснасем, сурăхсем туянас ĕçре государство енчен тата общество енчен пулăшассине организацилес ĕçе вăйлатмалла, выльăх усраман колхозниксене тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пама колхозниксенчен контрактаци планне пурнăçа кĕртес майпа тата çав плана ирттерсе тултарса, выльăх-чĕрлĕх сутăн илмелле, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата государствăна аш-какай памалли плана тултарнă хыççăн фермăсенчен ĕçкунĕсемшĕн çамрăк выльăхсем памалла.

Колхозсене çапла тума ирĕк парас: пĕрлешӳллĕ пуху йышăннă тăрăх, выльăх усрайман колхозниксене сутма выльăх усракан колхозниксенчен çамрăк выльăхсем сутăн илмелле, çав выльăхсене колхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисем валли сутăн илнĕ чухнехи хаксемпе илмелле.

2. Вырăнĕсенчи совет органĕсемпе колхозсен правленийĕсене харпăрхăй выльăх-чĕрлĕхĕ валли шултăра тата сĕткенлĕ апат çителĕклĕ хатĕрлеме колхозниксене, рабочисене, служащисене пур майсемпе те пулăшса пыма хушас.

Колхоз правленийĕсене çапла тума ирĕк парас: государство умĕнчи обязательствăсене тултармалăх, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе çитермелĕх тата тивĕçлĕ страховой запассем тумалăх утă пухса илнĕ хыççăн, çулмасăр юлнă улăхсене çулса илме колхозниксене уйăрса памалла; колхоз правленийĕсем ыйтнă тăрăх, государствăн вăрман фончĕсемпе çĕр фончĕсенчи усă курман участоксенче утă çулса илмешкĕн колхозниксене çĕр уйăрса пама райисполкомсене ирĕк парас.

3. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене çакăн пек тума хушас: выльăх-чĕрлĕх фермисенче колхозниксен ама выльăхĕсене пурне те пĕтĕлентерме кирлĕ чухлĕ вăкăрсем, такасем, сысна аçисем тата ытти аçа выльăхсем çителĕклех пулмалла.

* * *

1. Выльăхсене ăнăçлăн хĕл каçарни выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне малалла ӳстерсе пырас тата 1946 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăнине шута илсе, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: пур районсем тăрăх та, районсенче вара пур колхозсемпе совхозсем тăрăх та выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас ĕç мĕнле пынине, фермăсенче выльăх апачĕ çăва тухиччен çитнипе çитменнине, колхозсемпе совхозсем çамрăк выльăхсене кĕтсе илме хатĕррипе хатĕр маррине, халех тĕрĕслесе тухмалла тата палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

2. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çак постановлени мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма хушас, ВКП(б) обкомĕн, крайкомĕн тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен бюровĕсенче, облисполкомсенче, крайисполкомсенче тата республикăсен совнаркомĕсенче—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç районсенче мĕнле пыни çинчен, районсенче вара—парти райкомĕн бюровĕпе райисполкомра — колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен уйăхра пĕрререн кая мар пăхса тухмалла, выльăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен тухăçлăхне ӳстермелли мерăсене йышăнмалла.

Тĕнчери лару-тăру

Европа континентĕнчи вăрçăн юлашки тапхăрĕнче, малтанхи пекех, тискер гитлеровецсене хирĕç пыракан вăрçăн тĕп йывăрлăхĕ Хĕрлĕ Çар çине ӳкет. Хĕрлĕ Çар январĕн пĕрремĕш çуррине темиçе фронтра пĕр харăс наступлени пуçласа яни пĕтĕм вăрçă историйĕнчи чи чаплă та тĕплĕ операцисенчен пĕри пуçланнине пĕлтерчĕ. Совет çарĕсем наступлени туни Германи çарĕн тĕп вăйĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран нисăта ямасăр çирĕп тытса тăчĕ çеç мар, нимĕç командованине вăл хĕвеланăç фронтĕнчен хĕвелтухăç фронтне чылай дивизисем хăвăрт куçарттарчĕ.

Нимĕçсем хĕвеланăçĕнче хăйсен контрнаступленине чарса лартрĕç. Çавна пула пирĕн союзниксене гитлерла çарсене хирĕç наступлени пуçласа яма лайăх май килсе тухрĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем наступлени тума пуçларĕç. Çав вăхăт тĕлне Хĕрлĕ Çар Германи территорине нумай кĕрсе кайрĕ, унăн стратегиллĕ пысăк пункчĕсене тытса илчĕ, нимĕçсене çарпа промышленноçăн паха центрĕсемсĕр тăратса хăварчĕ, Германи столицине Берлин хулине тата Германин ытти пысăк центрĕсене хăрушлăх умне тăратрĕ. Çакăн пек лару-тăрура союзниксен çарĕсем Рейн урлă каçрĕç, Германи ăшнелле хăвăрт кĕме пуçларĕç.

Англипе Америка хаçачĕсен корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америкăн танковăй колоннисем, Германи территорийĕпе пыраканскерсем, нимĕçсем хирĕç тăнине курмаççĕ теме те пулать. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çарăн халăх пурăнакан кашни пунктрах гитлеровецсем урса кайса çапăçнипе çĕмĕрсе пыма лекет.

Çав çапăçусенче Хĕрлĕ Çар Германи çарĕсен тĕп вăйĕсене халран ярса пырать. Вĕсем пĕтесси инçе мар ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра Совет çарĕсем Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен пысăк группировкине аркатса тăкрĕç, Венгри çĕрне пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларчĕç, Братислава хулине тытса илсе, Австри çĕрне кĕрсе кайрĕç. Хĕрлĕ Çар Австри столици патне—Вена хули патне çитрĕ.

Çав вăхăтрах Англи çарĕсем Оснабрюк хулинчен хĕвелтухăçнерехре малалла куçса пыраççĕ. Американецсен 3-мĕш армийĕн чаçĕсем, Гота хули патне çитсе, Тюринги çĕрĕ çине кĕрсе кайнă.

Германири лару-тăру çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать. Халăх хăраса ӳкнĕ, апат-çимĕç çитменни ытларах та ытларах палăрать, çар арканса пырать.

Поражени умĕнче тăракан нимĕçсем çĕнĕ вăрçă тăвас шутпа пытанса ĕçлеме васкасах хатĕрленеççĕ. 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă хăйĕн докладĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Нимĕçсем халех çĕнĕ вăрçа хатĕрленеççĕ», терĕ. Гитлеровецсем пытанса ĕçлеме хатĕрленни çинчен общинăсен палатинче Англин ют çĕршывĕçĕсен министрĕ Иден та асăрхаттарнăччĕ. Кăçалхи мартăн 30-мĕшĕнче США-н государство департаменчĕ уйрăм заявлени пичетлесе кăларчĕ. Вăл заявленире çапла каланă: «Союзлă çĕршывсен правительстви сем пухнă тĕплĕ информаци çакна кăтартса парать: нацистла режим вăрçă хыççăн нацистсен доктринисене тата нацистсем пуç пулса тăрассине сыхласа хăварас тĕлĕшпе тĕплĕ плансем туса хунă». Паллă гитлеровецсем васкасах хăйсен паспорчĕсене улăштараççĕ, урăх çĕре пурăнма куçаççĕ: урăх ĕçсене куçаççĕ. Диверсантсем, террористсем хатĕрлеме эсэсовецсем ятарласа шкулсем уçнă.

Нимĕç фашисчĕсен çав планĕсене аркатса тăкмашкăн питĕ сыхă тăмалла.

* * *

Çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли гитлерла плансенче фашистла Испани çине пысăк шанчăк хываççĕ. Нацистсем Испанире пытанса пурăнма, вăрттăн ĕçлекен нимĕç предприятийĕсене туса хурас тĕлĕшпе усă курма ĕмĕтленеççĕ. Гитлерла Германие кĕç-вĕçех аркатса тăкассинчен шикленсе, фашистла Испани пуçлăхĕсем хăйсене хăйсем «демократи тусĕсем» пек кăтартма хăтланаççĕ. Испанири хăшпĕр хаçатсем, нумаях пулмасть фашистла Испани гитлерла Германипе пĕр шухăшлă пулнине ӳссăнах кăтартнăскерсем, Франкопа Гитлер туслă пурăнни çинчен нумай çырнăскерсем, халĕ ĕнтĕ фалангистла режимпа фашистла режим хушшинчи «уйрăмлăхсене» кăтартса пама, США-па тата Англипе туслă пурăнма тăрăшнине кăтартса пама хăтланаççĕ.

Гитлеровецсем халь те Аргентинăра хӳтлĕх тупаççĕ-ха. Лару-тăру хушнă пирки Аргентина правительстви тĕнĕл держависене хирĕç вăрçăпа тухни çинчен пĕлтерчĕ пулин те, çавах вăл хăйĕн фашистла политикине улăштармарĕ. Америкăри «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ апрелĕн 3-мĕшĕнче Буэнос-Айресран çапла пĕлтернĕ: «Тĕнĕл держависене хирĕç Аргентина вăрçăпа тухасси çинчен пĕлтерес умĕн пĕр виçĕ кун маларах кăна Аргентина правительстви нимĕçсемпе Японин дипломачĕсене, çавăн пекех тĕнĕл держависен агенчĕсене çĕршыв тăрăх ирĕклĕн куçса çӳреме май панă». Çак факт ĕнтĕ хăшпĕр çĕршывсем Германие хирĕç вăрçăпа тухни çинчен пĕлтерни Пĕрлешӳллĕ нацисен Гитлера хирĕçле фронтне чăн-чăнах хутшăннине пĕлтермест-ха.

Аргентина Германие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернине хăшпĕр хаçатсем тĕрĕс хак параççĕ. Çĕнтерне çĕршывсем умĕнче шанчăка тухса, çав шанчăкпа усă курса, Аргентина Латинла Америкăра Пĕрлешӳллĕ нацисене хирĕç кĕрешекен нацистла центрсене упраса хăварма шутлать, теççĕ вĕсем.

Г. БЕСПАЛОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Голландире Зютфен хули районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Хули хăй халь те нимĕçсен аллинчех-ха. Союзниксен çарĕсем хăйсем йышăннă Альмело хулинчен çурçĕр тата хĕвелтухăç еннелле чылай куçнă.

Линген районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Хулана тăшмантан тасатса çитермен-ха. Герфорд тата Бад-Эйнхаузен хулисенчи тăшман гарнизонĕсем союзниксене парăннă.

Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Мюльхаузен хулине тăшмантан тасатнă та хуларан 13 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă.

Вюрцбург хулинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Вюрцбург хулин пысăк пайне тăшмантан тасатнă. Тăшман тунă контратакăсене пула, союзниксен чаçĕсем хулан çурçĕр пайне чакнă пулнă, анчах та çав контратакăсене сирсе янă та союзниксен çарĕсем вăл районсене нимĕçсенчен тепĕр хут тытса илнĕ. Хулара 1.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Союзниксен Шпейер хулинчен кăнтăртарахра Рейн шывĕ урлă каçса Карлсруэ хулине йышăннă çарĕсем Рейн шывĕнчен 48 километр ытла хĕвелтухăçнерехри Некшар шывĕ патне çитнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраşĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, 5-мĕш армин чаçĕсем фронтăн хĕвеланăç флангĕнче Масса хулинчен кăнтăртарахра 2 миля малалла куçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă.

ЮГОСЛАВИ ÇАРЕ САРАЕВО ХУЛИНЕ ИРЕКЕ КАЛАРНА

БЕЛГРАД, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Югослави çарĕн чаçĕсем Боснипе Герцеговинăн тĕп хули тата шоссепе чугун çулсен паха узелĕ пулса тăракан Сараево хулине штурмласа туртса илнĕ.

НИМЕÇСЕМ ШВЕЦИРЕ ПЫТАНАÇÇЕ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат çапла çырать: «Хальхи вăхăтра Германирен таракан çынсен хисепĕ чылаях ӳссе пырать. Швеци Германин Хĕвелтухăç пайĕсенчен таракан çынсем унччен те карапсемпе тата самолетсемпе пынă. Апрелĕн 4-мĕшĕнче ирхине таракан çынсен çĕнĕ йышĕ пырса çитнĕ. Истад çывăхĕнчи Нюбро ятлă пулăçсен поселокĕ çывăхĕнче нимĕçсен 3 самолечĕ анса ларнă. Вăл йышши самолетсем çинче штабсен аслă членĕсем кăна çӳреканччĕ. Çавăнпа та ку самолетпа Швеци хӳтлĕх шыракан паллă çынсем килнĕ пуль тесе шутлама пулать».

СОВЕТ СОЮЗЕПЕ ЯПОНИ ХУШШИНЧИ НЕЙТРАЛИТЕТ ПАКТНЕ ПАРАХАÇА КАЛАРНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇЕРШЫВСЕНЧЕ МЕН КАЛАÇÇЕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăра Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен питĕ нумай калаççĕ. Америка радиостанцийĕсем ĕнер çав пакт çинчен пĕлтерме хăйсен передачисене чарнă. Конгресăн нумай членĕсем тунă заявленисенче тата Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен калакан радио обзорĕсенче çав факт политика енчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен калаççĕ, кун пирки хăйсен тĕрлĕ шухăшĕсене палăртаççĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Англири радио Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларасси çинчен пĕлтернине темиçе хут та панă. Англи хаçачĕсем паян ку ĕç пирки нумай çыраççĕ, вăл ĕç пит паллă вырăн йышăнса тăни çинчен калаççĕ. «Таймс» хаçат çапла калать: хальхи вăхăтра пакт хăйĕн пĕлтерĕшне çухатрĕ, çавăнпа та Росси ăна малалла тăсма май çукки çинчен каларĕ, тет.

Хаçат обозревателĕсем Совет Союзĕпе Япони хушшинчи çыхăнусем малашне мĕнле пуласси çинчен тата Совет Союзĕпе Япони хушшинчи пакта пăрахăçлани пĕтĕм тĕнчери вăрçăпа политикăллă лару-тăрура мĕнле палăрни çинчен хăйсен тĕрлĕ шухăшĕсене каласа параççĕ.

КЕСКЕН

* Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцире Канада делегацин руководителĕ Канадăн премьер-министрĕ Маккензи Кинг пулать.

* Çак кунсенче американецсен хураллаcа пыракан 4 эсминецĕ Атлантика океанĕн вăтам пайĕнче Германин подводнăй лодкине путарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшне çитиччен Чăваш республикинчи ухутниксене тепĕр хут çырса тухаççĕ тата Чăваш республикинчи ухутниксен обществине çĕнĕ членсем илеççĕ.

Ухутниксен клубĕн членĕсем ухута билетне илсе пуçламĕш организацие—ухутниксен коллективне, ухутниксен районри обществин правленине е Шупашкара, Плеханов урамĕнчи 37-мĕш номер çурта пыраççĕ.

Ухутниксен обществин членне çĕнĕрен кĕрекенсен хăйсен паспортне е удостоверенине кăтартмалла тата виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ тăратмалла. Члена кĕрекенсем пĕр вăхăтлăха 25 тенкĕ тата 1945 çулшăн член укçи 50 тенкĕ тӳлеççĕ.

Ухутниксен обществине çĕнĕрен кĕнĕ членсене ухутниксен районри обществин правленийĕ е республикăри обществин правленийĕ ухутана çӳремелли билет парать.

Правлени.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00057 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2, Тираж 16.000